◆ Асанне арчи

*Николай ИШЕНТЕЙ*

# Телей тӗрри

– Пукане тетӗп, Пукане! Эсӗ ватӑ асаннесен тӗрри-эрешне "ҫыруллӑ" терӗн. Мана унпа тӗплӗнрех паллаштар-ха, – чӗвӗлтетрӗ Майрукка.

– Тӗрӗс, тусӑм, кашни ҫӗвӗ, кашни эреш, букварьти ҫыру пекех, мӗне те пулин пӗлтерет, – ҫапла каларӗ те Пукане арчаран тутӑр илчӗ. – Ҫакна ташӑ тутри теҫҫӗ.

– Ай хитре-ҫке тутӑрӗ. Хумлӑн-хумлӑн ҫӗвӗлесе тӗрленӗ ӑна тӗрӗ ӑсти.

– Чӑн та, ку тӗрӗ шыв юхӑмне аса илтерет. "Ташши-ташши, шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юххи", – акӑ епле такмакланӑ хӗр упраҫ ҫакнашкал тутӑрпа сулкалашса ташланӑ чух.

– Кунта хӗреслӗ йӗрсем те пур-иҫ...

– Чӗкеҫ хӳри теҫҫӗ ку тӗрре.

– Кӗтеслӗ-кӗтеслӗ паллӑсене те асӑрхама пулать. Тӑваткалли, виҫӗ кӗтесли, нумай енли... Вӗсем тата мӗне пӗлтереҫҫӗ? – ыйту хыҫҫӑн ыйту парать хӗр ача. Тем те пӗр пӗлекен Пукане аран ҫеҫ хуравлама ӗлкӗрет.

– Ку ҫекӗл палли. Тепри вара – кӑкшӑм, виҫҫӗмӗшӗ – пучах. Пӗлӗтпе ҫӗр те пур унтах.

– Ай кӑткӑс-ҫке тӗрри-эрешӗ! Ҫӑмӑл пулман-тӑр вӗсене чечеклеме. Ҫине тӑрсах мӗн тума пусма ҫине куҫарнӑ-ха вӗсене авалхи ҫынсем?

– Телей ҫулӗ шыраса.

– Телей ҫулӗ?.. Ай, манӑн та телейлӗ пуласчӗ, Пукане тус! Вӗрент мана та телей тӗррине тӗрлеме.

Пукане хирӗҫлемерӗ, хӗр ачана кирлӗ кӑтартусем пама пуҫларӗ. Ырми-канми Майрукка



йĕппе çиппине вылянтарма та, ыйту хыççăн ыйту пама та ĕлкĕрчĕ.

– Çакă-и телей тĕрри? – ыйтрĕ вăл минтере капăрлатнă май.

– Çук, ку минтер пичĕ. Тăвата кĕтеслĕ тăванлăх палли – кил илемĕ те çемье ăшши.

– Эппин çакă пуль? – терĕ хĕр ача хутаç çине çĕвĕллĕ тĕрĕсем хывса.

– “Вĕрене çулçи” теççĕ ăна çынсем, – хуравларĕ Пукане. – “Вĕрене çулçи кĕteслĕ. Тем чуль кĕтес пулсан та пире хваттер ярас çук”, – çапла юрланă килсĕр-çуртсăр çӳрекенсем...

– Телей тĕрри куçа курăнмасть пулинех, – хаш сывларĕ Майрукка, хăй мĕн ĕмĕтленнине пурнăçа кĕртейменшĕн хурланса.

Шăп та лăп çак вăхăтра пырса кĕчĕ картишне асанне.

– Асанне, эпир Пуканепе иксĕмĕр кунĕпе телей тĕррине шырарăмăр, анчах тупаймарăмăр, – кăмăлсăррăн евитлерĕ Маруйкка.

– Телей тĕррине шырарăмăр терĕр-и-ха?.. Ку питĕ аван. Пĕлетĕн-и, мăнукăм, телей вăл хамăрпа юнашарах çӳрет, анчах ӳркевçĕсенчен, хăяккăн выртакансенчен сисмесле пăрăнса иртет.



– Телей çапла чее-им?

– Чее темелле-ши ăна е Пӳлĕх пилĕ темелле-ши? Эсĕ, Майрукка, ĕçчен ача. Ав мĕн чухлĕ тĕрĕ тĕрлеме ĕлкĕрнĕ. Эппин санран телей пăрăнса иртместех. Пиллĕ-парнеллĕ пулатăнах.

– Епле курмалла-ха ăна, телее?

– Телей тени – йышра аван пурăнни. Телей – ху эс, Майрукка. Эсĕ ырă-сывă пурăнни, ĕç ăсталăхне алла илни – маншăн та, аçу-аннӳшĕн те телей. Чăн-чăн телей тĕррине ăстаçăсем тĕрлеççĕ. Кашни хăйне валли. Пĕтĕм пурнăç тăршшĕпех эрешлеççĕ çав тĕрре. Телейлĕ пулма кашни çыннăнах ирĕк пур.

## Ваттисем çапла калаççĕ:

- Телее ăна вăхăтра тытма пĕлес пулать.
- Телее ĕçре шыра.
- Телее тĕлĕкре тупма çук.
- Телей вăйли енче.
- Телейлĕ çын çăлтăрĕ ялкăшса çунать.

ЯЗАТЕЛЬНЫ
ЕСПЛАТНЫ
ЭКЗЕМП

*Проект реализуется при поддержке Минкультуры Чувашии.* Татьяна НЕМЦЕВА